*Педюсева Г. А.,*
*Куславккари вăтам пĕлÿ паракан 3-мĕш номерлĕ шкул вĕрентекенĕ*

# «ЧĂВАШ ЧĔЛХИ КУНĔ» УЯВА ИРТТЕРМЕЛЛИ МАТЕРИАЛ

**1. Проект ĕçĕн тĕллевĕсем:**

– 9 класра «Чăваш чĕлхи кунĕ» уяваирттерме материал пуçтарасси.

– «Чăваш чĕлхи кунĕ» темăпа уçă урок ирттерме хатĕрленесси.

**2. Проект ĕçĕн задачисем:**

– Ачасен хăйсем тĕллĕн ĕçлес туртăмне ÿстересси.

– Ачасене тĕпчев-шырав ĕçне хăнăхтарса пырасси, документсемпе ĕçлеме, хăйсен шухăшне калама, çырса пама вĕрентесси.

– Ачасен таврa курăмне анлăлатасси, ăс-тăнне, чун-чĕрине пуянлатасси.

– Тăван халăха хисеплеме, унăн ырă енĕсене хаклама вĕрентесси.

– Тăван чĕлхе тата тăван литература илемлĕхне, пуянлăхне кăтартса парасси.

– Тăван халăхшăн тăрăшасси кашни чăвашăн тивĕçĕ пулнине ĕнентересси.

**3. Проект тухăçлăхĕ:**

– Проект ĕçне ачасене активлă хутшăнтарасси.

– Кирлĕ материал пуçтарса уçă урок ирттересси.

**4. Проект актуаллăхĕ:**

Чăваш чĕлхине, халăха упраса хăварас тесен республикăра ирттерекен мероприятисене (Правительство шайĕнчисене те!) чăвашлатмалла, Правительствăра ытларах чăваш чунлĕ çынсем ĕçлемелле, шкулсен чăвашлăхшăн çунакан çамрăк ăру вĕрентсе кăларма тăрăшмалла. Республикăри пур шкулта та чăвашла вĕрентетпĕр-ха эпир. Халăх уявĕсем те ирттеретпĕр. 1992 çултанпа Чăваш чĕлхи кунне паллă тăватпăр: юрлатпăр, ташлатпăр, савăнатпăр. Анчах юрлани-ташлани çеç çителĕксĕр пулĕ: кирек мĕнле чăваш уявĕ те икĕ пайран тăнă-çке. Çавна май ачасене шкултах чăвашлăхпа çыхăннă документсемпе паллаштарма тытăнсан аван пулмалла. Çакнашкал документсенчен пĕри вăл – «Чăваш чĕлхи кунĕ ирттересси çинчен» йышăну. Калăпăшĕ те пысăк мар унăн. Ăна пăхса тухма пĕр урок та çителĕклĕ. Ан тив, вĕренекенсем текста тишкерччĕр, вырăсла вариантне чăвашлипе танлаштарччăр, документра мĕн çырнине пурнăçлама тăрăшчăр. Çапла майпа, тен, халăхăн ырă йăли-йĕркине, чĕлхине упраса хăварма май килĕ. Тăван халăхшăн тăрăшасси – кашни чăвашăн тивĕçĕ.

**5. Тĕп шухăшĕ:**

Чĕлхе пулсан халăх та пĕтмест.

**6. Проекта пурнăçлама усă курнă меслетсемпе мелсем:**

1) суйласа илнĕ темăпа литература шырани;

2) темăпа çыхăннă ваттисен сăмахĕсене, сăвă йĕркисене, паллă çынсем каланисене шыраса тупни;

3) «Аслă вĕрентекенĕмĕр» темăпа викторина ирттерни;

4) «Чăвашлăх пирки шухăшласа» темăпа анкета ыйтăвĕсене хуравлани;

5) кирлĕ материала ксерокопи туса илни;
6) уçă урок валли презентаци, видиоролик туни;
7) тест, кроссворд, цифрограмма хатĕрлени;
8) сценка лартни;
9) кластерпа синквэйн туни;
10) хаçат кăларни;
11) «Урок иртнĕ хыççăн …» темăпа пултарулăх ĕçĕ çыртарни.

**7.Теори бази:**

1. Андреев, И. А. Чăваш чĕлхи программи : вырăс шкулĕн 5-9 класĕсем валли / И. А. Андреев. – Шупашкар, 2004.
2. Егорова, Л. В. Ачасен пуплевне аталантармалли хăнăхусем : вырăс шкулĕн IV-IX класĕсем валли / Л. В. Егорова, И. Р. Михайлова. – Шупашкар, 2011. – 119 с.
3. Кузьмина, Л. Н. Чăваш чĕлхи урокĕсем : вырăс шкулĕнче усă курмалли материалсем / Л. Н. Кузьмина. – Шупашкар : Л. А. Наумов изд-ви, 2006. – 100 с.
4. Патмар, И. А. Халăх ăслăлăхĕ / И. А. Патмар, Э. И. Патмар. – 5 №. – 1995.
5. Патмар, Э. И. Чăваш халăх календарĕ / Э. И. Патмар. – Шупашкар : Чăваш кĕнеке изд-ви, 1995. – 112 с.
6. Халăх ăс-хакăлĕ. – 2 №. – 2001.

**8. Пулмалли результат:**

1. Ачасен активлăхĕ, тăрăшулăхĕ, пуçарулăхĕ, ĕçченлĕхĕ.
2. Ачасен тавра курăмпа ăс-хакăл аталанăвĕ, тĕпчев-шырав ăсталăхĕ.
3. Ачасен чăвашлăхшăн тăрăшас туртăмĕ, вĕсен чун-чĕре пуянлăхĕ.

**Урок теми: Чăваш чĕлхи кунĕ**

**Урок эпиграфĕ:**

*Эпир пулнă, пур, пулатпăр!*

*(П. Хусанкай)*

**Тĕллевсем:**

***1. Сапăрлăх тĕллевĕ:*** хамăр халăхăн мухтавлă ывăл-хĕрне хисеплеме, вĕсемпе хăпартланма, халăхăмăр пуçарулăхне тĕпе хурса унăн ырă йăли-йĕркине тытса пыма вĕрентесси.

2. ***Пĕлÿ тĕллевĕ:*** Чăваш чĕлхи кунне туса хурасси çинчен йышăннă Постановленипе паллаштарасси, унăн тĕп пайĕсене палăртасси.

3. ***Аталантару тĕллевĕ:*** чăвашла тĕрĕс те илемлĕ калаçма хăнăхтарасси, диалог, монолог тума вĕренесси, документсемпе ĕçлеме хăнăхтарса пырасси.

**Урокра кирлĕ хатĕрсем:** компьютер, проектор, экран, кĕнеке выставки.

**Курăмлăх хатĕрĕсем:** урок темине уçса пама пулăшакан презентаци, «Иван Яковлев» видиоролик, анкета хуравĕсем, ваттисен сăмахĕсем, ачасен хаçат кăларма хатĕрленĕ материалĕсем, В. Леонтьев юрăçăн, «Шевле» ушкăн юррисен дискĕсем, «А. Кипеч поэтпа ирттернĕ тĕлпулăвăн пĕр саманчĕ» диск.

## Урок юхăмĕ

**I. Вĕреннине аса илни.**

*1. Урок пуçламăшĕнче «Шевле» ушкăнăн «Урокра» юрри янăрать. Ку ачасене вырнаçса ларма кирлĕ.*

**2.** *Ыйтусене хуравлани. Ачасен тӳр килекен вариантне тупмалла (блиц-хурав пек).*

| | |
|---|---|
| – Мĕн сас пачĕ? | а) урока |
| – Вăл ăçта чĕнет? | ă) парта хушшинче |
| – Класс ăçта шăпланчĕ? | б) ялан |
| – Учитель мĕнле? | в) шăнкăрав |
| – Вăл хăçан кăмăллă? | г) савăк кăмăллă |

**3** *Вĕрентекен сăмахĕ*. Паян пирĕн пурин те савăк кăмăллă пулмалла, мĕншĕн тесен паян – уяв. Чăваш чĕлхи кунĕ. Хăçан палăртма пуçланă-ши çак уява? Мĕнлерех ирттермелле-ши ăна? Шăпах çакăн çинчен пулĕ паянхи сăмах урокра. Çавна май эпир сирĕнпе Чăваш Республикин Аслă Совечĕн Президиумĕн (халĕ вăл – Патшалăх Канашĕ) Постановленийĕпе паллашăпăр, документсемпе ĕçлеме хăнăхăпăр, вăл мĕнле пайсенчен тăнине тишкерĕпĕр, паллă çынсемпе «тĕлпулу» йĕркелĕпĕр…

Мĕнле шутлатăр, ачасем, иртнĕ урокри хăш сăмахсем паянхи урок эпиграфĕ пулма пултараççĕ. Çапла, эпĕ те сирĕн шухăшпа килĕшетĕп, Петĕр Хусанкайăн «Эпир пулнă, пур, пулатпăр!» сăмахĕсене урок эпиграфĕ тума пулать.

4. *Килти ĕçе тĕрĕслени.* (Килте вĕренекенсен Постановлени тексчĕпе паллашмаллаччĕ, таблица тумаллаччĕ. Вĕрентекен ачасен тетрачĕсене пăхса тухать).

**II. Çĕнĕ темăпа ĕçлени.**

*1.Текстпа ĕçлени.* (Ачасем Постановлени тексчĕпе килтех паллашнă. Унăн чăвашла тата вырăсла тексчĕсене пăхса тухнă).

1) Текст пайĕсене вырăсла тата чăвашла саспа вулани. Иккĕн вулаççĕ: пĕри чăвашла, тепри вырăсла.

2) Учитель Постановлени пайĕсем мĕнле йĕркепе вырнаçнине кăтартма слайдпа усă курать, ачасем Йышăнуран тупса вуласа пыраççĕ.

1. Постановлени ячĕ.
2. Мĕнле коллегиаллă орган йышăнать?
3. Тĕп пайĕ (мĕн çинчен калать)?
4. Дата.
5. Кам алă пуснă.

3) Постановлени тăрăх калаçу ирттерни.

– Постановление мĕнле орган йышăнать? (Президиум Верховного Совета ЧР – Чăваш Республикин Аслă Совет Президиумĕ).

– Халĕ вăл мĕнле орган? (Патшалăх Канашĕ – Государственный Совет).

– «Постановляет» сăмаха мĕнле куçарнă? («Çапла йышăнать»).

– Тĕслĕхрен, «лар» глаголран «лару» япала ячĕ пулнă, «çыр» сăмахран – «çыру». «Постановлени» сăмаха мĕнле калама пулать? Вăл «йышăн» сăмахран пулать. («Йышăну»).

– Чăваш чĕлхи кунне хăçан ирттерме палăртнă? (Ака уйăхĕн 25-мĕшĕ).

– Паян-и? (Çук, ĕнерхи кун).

– Ака уйăхĕн 25-мĕшĕнче кам çуралнă? (И.Я. Яковлев).

– Ун ячĕпе уяв ирттермелĕхех И.Я.Яковлев чăвашшăн мĕн тунă-ши? (Чăвашсене çутта кăларнă, чăваш çĕнĕ çырулăхне йĕркелесе янă, букварь кăларнă, шкулсем уçнă).

*2. Тест ирттерни.* (Ыйтăвĕсене вĕрентекен вулать – ачасем итлесе хуравлаççĕ. Ыйтăвĕсем ачасемшĕн çĕнĕ мар, мĕншĕн тесен «Аслă вĕрентекенĕмĕр» темăпа викторина пулнă).

*3. Теста тĕрĕслени.* (Вĕрентекен видиоролик пăхма сĕнет. Унтан ачасем тетрачĕсене пĕр-пĕринпе ылмаштараççĕ, хуравĕсене слайд тăрăх тĕрĕслеççĕ, пĕр-пĕрин ĕçне хаклаççĕ).

*4. Кану саманчĕ.* (Учитель ачасене тăма хушать, алă, мăй, хулпуççи, хырăмпа çурăм валли тĕрлĕ хусканусем тутарать).

*5. Постановленин иккĕмĕш пайĕпе ĕçлени.*

1) Пĕр ача иккĕмĕш пайне тепĕр хут саспа вулать.

2) Учитель ыйтусем парать, арçын ачасем вырăсла, хĕр ачасем чăвашла варианчĕсене тупса калаççĕ.

– Чăваш чĕлхи кунне ирттерессишĕн хăш министерство явапла?

| *Чăвашла* | *Вырăсла* |
|---|---|
| – Халăха вĕрентес ĕç, наукăпа аслă шкул министерстви, Культура министерстви. Халĕ вĕсем… | – Министерство образования, науки и высшей школы, Министерство культуры. Сейчас они… |

3) *Икĕ енлĕ дневник тутарни.* (Арçын ачасем чăвашла, хĕр ачасем вырăсла çыраççĕ).

| Мероприятисене ăçта-ăçта ирттерме палăртнă? | |
|---|---|
| Чăвашла | Вырăсла |
| – çул çитмен ачасен учрежденийĕсенче | – в детских дошкольных учреждениях |
| – шкулсенче | – в школах |
| – училищĕсенче | – в училищах |
| – аслă тата специальноçпа вăтам пĕлӳ паракан вĕренӳ заведенийĕсенче | – в высших и средних специальных учебных заведениях |
| – культура учрежденийĕсенче | – в учреждениях культуры |
| – театр-концерт предприятийĕсенче | – в театрально-зрелищных предприятиях |

*4. Хĕвеллĕ кластер туни.* («Вĕсен (министерствăсен) чăваш çырулăхне халалланă мероприятисен ярăмне палăртмалла», – тенĕ Йышăнура. Мĕнле мероприятисем ирттерме палăртнă?)




**III. Çирĕплетни.**

– Çапла, паян – уяв. Мĕн-ши вăл уяв?

*1. Синквэйн туни.*

Япала ячĕ: Уяв.

Паллă ячĕ: Хаваслă, чаплă.

Глагол: Ташла, юрла, савăн.

Предложени: Чаплă уявра çынсем ташлаççĕ, юрлаççĕ.

Пĕтĕмлетӳ сăмахĕ: Савăнăç.

*2. Слайдра кăтартнă ваттисен сăмахĕсенчен хăшĕсем паянхи куншăн пĕлтерĕшлĕ? (+ тата – паллăсем лартса паллă тумалла).*

1. Уяв ачи туй тăвать, анин тырри макăрать.
2. Уяв кун ĕçлесен ĕç ăнмасть тет.
3. Уяв кунĕ ĕçлесен эрнипех шăмшак йывăр теççĕ.
4. Уяв кун уяв тумасан уяв турри çилленет тет.
5. Уяв çуни сулнăкра, эпир хамăр сулнăкра.
6. Уяв уяв пек пултăр теççĕ.
7. Уявăн хăйĕн вăхăчĕ пур.
8. Халĕ уяв самантне пуçлатпăр.

*Кашни учитель хăйне майлă ирттерме пултарать.*

4. Урокра хамăр мĕнле-мĕнле ĕç туса ирттернине пĕтĕмлетсе кроссворда тултарăпăр, хаçат «кăларăпăр».

1) Ачасем кроссворд тупсăмĕсене туха-туха çыраççĕ, паллă тунă йĕркере «Чăваш чĕлхи кунĕ» сăмахсем вуланĕç.

2) Кашни ача мĕнле ĕç тунине калать, хăй ĕçне хаçата вырнаçтарать.

3) Анкета хуравĕсене пĕтĕмлетни

**IV. Вĕрентекен пĕтĕмлетĕвĕ.**

Чăваш Республикин Аслă Совечĕн Президиумĕн (халĕ вăл – Патшалăх Канашĕ) Постановленийĕпе килĕшӳллĕн Чăваш чĕлхи кунне пĕрремĕш хут 1992 çулта уявланăччĕ. Унтанпа 20 çул та иртсе кайрĕ. Чăнах та, И.Я.Яковлев

çуралнă кун тата Чĕлхе кунĕ пĕр уяв пулса тăчĕç. Сăмах Аслă вĕрентекенĕмĕр çинчен пырать пулсан чăваш чĕлхи аталанăвĕ пирки калаçатпăр, чăваш халăх кун-çулне тишкернĕ май Иван Яковлевича асра тытатпăр. Паян эпир сирĕнпе çак уяв хăçан тата мĕнле пуçланнине пăхса тухрăмăр, правительство Йышăнăвĕнче мĕн палăртнине пурнăçлама тăрăшрăмăр. Анкета хуравĕсене пĕтĕмлетсе çакна калама пулать. Эсир маттур ачасем. Чăвашла кăмăлласах вĕренни сисĕнет. Тен, эсир хăшĕ те пулин юрăçă е тĕпчевçĕ пулăр, тепри вара президентах çитĕ… Анчах чăваш ятне ан манăр! Аслă вĕрентекенĕмĕр «Халалне» асра тытăр. (слайдри сăмахсене пурте сасăпа вулаççĕ).

**V. Киле ĕç пани. Суйласа илмелĕх**

1. **Постановленин 3-мĕш пайĕпе ĕçлесси.** Шкул хаçачĕ валли шкулта ирттернĕ пĕр-пĕр мероприятие сăнлакан заметка çырăр.

2. И. Я. Яковлев «Халалне» вуласа тухăр, унпа паллашнă хыççăн çуралнă шухăшсене вырăсла çырса парăр.

3. Пуçватмăш тупсăмне тупăр. Ку сăмахсене кам каланă-ши?

**ХУШСА ПАНИ**






*Софронова А. И.,*
*Ҫĕнĕ Шупашкарти 19-мĕш номерлĕ шкул вĕрентекенĕ*

## КРОЛИКСЕМ – АЧАШ ТА ПĔЧĔК ЧĔР ЧУНСЕМ
### (6-мĕш класра ирттермелли урок планĕ)

**Сапăрлăх тĕллевĕсем:** 1) чĕр чун тĕнчине юратма, упрама, вĕсен капăрлăхĕпе киленме, чĕр чунсене пăхма вĕрентесси;

2) пĕр-пĕринпе килĕштерсе, туслă ĕҫлеме вĕрентесси.

**Пĕлӳ тĕллевĕсем:** камăнлăх падежĕн нумайлă хисеп форминчи япала ячĕсемпе пуплевре тата ҫырура тĕрĕс усă курма вĕрентесси; килти чĕр чунсен ячĕсене аса илсе ҫирĕплетесси; кроликсем ҫинчен, вĕсен пурнăҫĕ ҫинчен ачасен пĕлĕвне анлăлатасси, кролик тĕсĕсемпе паллаштарасси; вырăсла ҫырнă текст тăрăх чăвашла ыйтусене тĕрĕс йĕркелеме, хуравлама вĕрентесси.

**Аталантару тĕллевĕсем:** ҫыхăнуллă пуплеве, шухăшлава, тимлĕхе, илемлĕ вулав хăнăхăвĕсене аталантарасси, сăмах йышне пуянлатасси.

**Урокра кирлĕ хатĕрсем:** компьютер, проектор, экран, темăпа хатĕрленĕ презентаци, валеҫсе памалли материал, кролик ӳкерчĕкĕ.

**Учебник:** Абрамова, Г.В. Чăваш чĕлхи : вырăс шкулĕн 6-мĕш класĕ валли / Г.В. Абрамова. – Шупашкар : Чăваш кĕнеке изд-ви, 2010.

**Ҫĕнĕ сăмахсем:** суккăр, ҫара, ачаш, мамăк, кайăк кролик, сĕлĕ, Вăта Ҫĕр.